27-мĕш çулĕ тухать. Хакĕ 20 бут.

1945
ЯНВАРЬ
12
ЭРНЕКУН
7(6758) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĕпе
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Колхозсенчи отчетлă пухусем

— Эпир пĕлтĕр çулталăкĕпех вăрçă шухăшĕпе пурăнтăмăр... Тăрăшса ĕçлерĕмĕр ялан фронтовиксем çинчен шухăшласа, ни. мĕссене çав тери кураймасăр ĕçлерĕмĕр. Эпир фронтшăн нимĕн те шеллесе тăмарăмăр... Вăхăтра тата ретĕн-ретĕн акса хăвартăмăр, лайăх сухалланă çĕр çине акрăмăр. Тырпула питĕ лайăх пуçтарса кĕртрĕмĕр, тырă çапас ĕçе вăраха ямарăмăр, государствăна обязательнăй ĕçкепе 643 центнер тата планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне 403 центнер тырă патăмăр.

Çак сăмахсене Горький облаçĕнчи Арзамас районĕнчи «Заря» колхоз правленийĕн председателĕ Георгий Леонтьевич Рослов калаçă. Вăл колхозниксен отчетлă пухăвĕнче хăйĕн колхозĕнпе ĕçĕсем çинчен çеç калаçа пăхă. Анчах та темиçе пин, темиçе вунă пин колхозĕн ĕçĕсем çинчен те çавăн пекех калама пулать. Пирĕн социализмлă ялхуçалăхĕ юлашки çулталăх хушшинче чылай малалла кайрĕ. Тунă ĕçсем çине пăхса, ялти ĕççыннисем хăйсемшĕн, колхоз ĕçĕкишĕн, тăван совет государствишĕн тивĕçлипе савăнса мухтанаççĕ. Анчах та совет çыннисем савăнса мухтанни вăл пĕрех те лăпланса ларнине пĕлтермест.

Çĕнĕ çулта колхозлă ял умне çĕнĕ задачăсем тухса тăчĕç. Тырпулсен тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕхсен хисепне тата вĕсен тухăçлăхне ӳстермелле, çĕршывпа фронта ытларах пулăшмалла— çакăн пек заказ илчĕ пирĕн ялхуçалăхĕ 1945 çул валли. Çав заказ мĕн чухлĕ ĕывăр пулсан та, ăна вăрçăн чи пысăк ĕывăрлăхĕсене ăнăçлăн тӳссе ирттернĕ колхоз стройĕ пурнăçа кĕртме пултаратех. Ана тума пĕр япала анчах кирлĕ: пирĕн ялхуçалăхĕнчи мĕнпур вăйсемпе, мĕнпур майсемпе тата лайăхрах усă курмалла.

Халĕ колхозсенче ялхуçалăхне 1945 çул. та малалла аталантармалли плансем тăвас ĕç пуçланать. Анчах та çавăн пек плансене тĕрĕс тăвас тесен, иртнĕ çулталăк хушшинчи ĕçсене пăхса, тишкĕрсе хакласа тухас пулать, халиччен усă курман пысăк резервсене палăртса хурас пулать, вĕсемпе усă курмалли майсене тупас пулать. Ялхуçалăх артелĕн уставĕнче каланă тăрăх, иртнĕ çулхи хуçалăх ĕçĕсене итог тунă—иртнĕ çулхи ĕçсем çинчен отчет çырса хатĕрленипе вĕçленет.

Çулталăкри ĕçсем çинчен отчет çырни — пĕтĕм хуçалăха тата унăн кашни пайне уйрăмăн пăхса тухни пулать. Анчах çак ĕçе питĕ паха кампани вырăнне хурса иртерсен çеç, çав ĕçе мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене хутшăнтарсан çеç хуçалăха пур енчен те лайăх пăхса тухма пулать. Çулталăкри отчета çырса хатĕрленĕ чухне кашни бригадăна, кашни звенона, кашни фермăна тĕрĕслесе тухас пулать. Колхозниксене хăйсен звенинчи, хăйсен бригадинчи канашлăвĕсенче хăйсен çулталăк хушшинчи ĕçĕсене пăхса тухма пулăшмалла, çав ĕçсен лайăх енĕпе начар енне палăртмалла, бригадăсемпе звеносене çирĕплетмелли мерăсене кăтартса памалла.

Çулталăкри отчета çырса хатĕрленĕ май колхозсем умне пысăк та ответлă задачăсем тухса тăраççĕ. Çав задачăсем хушшинче общественнăй çĕрпе, колхозăн мĕнпур производство хатĕрĕсемпе тата ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курнине тĕрĕслесси, мĕнпур пурлăха çирĕп учета илесси—чи паха задача пулса тăрать. Колхоз пурлăхне тирпейлĕр тытмалланине, пурлăха пăснине е сухалланине палăртмасăр хăварма юрамасть. Анчах та кунта çавăн пек фактсене палăртнипе çеç лăпланса лармалла мар. Чи кирли кунта—производство хатĕрĕсемпе, колхоз пурлăхĕпе, продуктсемпе тата укçапа усă курас ĕçе çирĕп йĕркелесе ярасси пулса тăрать.

Çулталăкри отчета çырнă чухне государствăн, колхозсен тата колхозниксен интересĕсене çирĕп шута илес пулать. Колхозсенче отчетлă пухусем туса ирттернĕ чухне те çав интерессем чи малти вырăнта тăмалла. Отчет тăвакан кашни колхозăн государство умĕнче парăмлă пулсан, колхозниксен пухăвĕ çав колхоз правленине государство умĕнчи парăма çирĕплетес пирки тата хушмалла, ăна парса татмашкăн мĕн тумаллине кăтартса памалла.

Малалла, артель хуçалăхне çирĕплетес тата малалла аталантарас тĕлĕшпе мĕн тумаллине, пур резервсене те ĕçе янипе яманнине, хуçалăхăн кашни пайне малалла ямашкăн мĕн тумаллине, общественнăй фондсем тунине тата ĕçсемпе мĕнле усă курнине пăхса тухас пулать. Çуракине мĕнле хатĕрленнине уйрăмах тимлĕн пăхса тухмалла! Вăрлăх фончĕсене хывса çитернĕ-и? Машинăсене, инвентаре, ут тавраш не вăхăтра юсаса хумашкăн мĕн тунă? Удобренисем мĕнле хатĕрлеççĕ? Отчетлă пухусен çак ыйтусене пурне те сӳтсе-явăн, сĕр пуçне тата çуракине хăвăртрах хатĕрленме май паракан мерăсене те палăртса хăвармалла.

Колхозсен çулталăкри отчечĕсене çырса хатĕрленĕ чухне, сӳтсе-явнă чухне тата çирĕплетнĕ чухне колхоз интересĕсемпе уйрăм колхозниксен интересĕсене пĕр-пĕринпе тĕрĕс сыхăнтарса пымалла. Авансем мĕнле парса пыни çинчен, ĕçшĕн хушса тӳлемелли закона мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен колхозниксене тĕплĕ каласа памалла.

Вăрçă вăхăтĕнче колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ питĕ нумай ӳснĕ. Анчах та колхозсенче ĕç резервĕсемпе çителĕклĕ усă курмаççĕ-ха. Ĕçе тухманнине, ĕçе кая юлса тухнине тата ĕç дисциплинине ытти майпа пăснине пĕтĕмпех пĕтермен-ха. Отчетлă пухусенче ĕçре чи малта пыракан колхозниксем çинчен, пуринчен нумайрах ĕçкунĕ тунисем çинчен, пысăк пахалăхпа ĕçленисем çинчен, ĕçре чи лайăх результат паниçем çинчен каласа кăтартмалла. Çавăнпа пĕрлех пухăва ĕçкунĕсен минимум, не пурнăçламан çынсен списокне вуласа памалла. Пухăван вара ĕç дисциплинине пăсакансем тĕлĕпше партипе правительство кăтартса панă тăрăх артель уставĕнчи мерăсене ĕлшăнмалла.

Колхозсен производствăпа хуçалăх ĕçĕсене итог тумашкăн колхоз правленийĕсен те, ревизи комиссийĕсен те нумай тата тăрăшса ĕçлемелле пулать. Анчах колхозсен ертсе пыракан кадрĕсем вăрçă вăхăтĕнче нумай улшăнчĕç, вĕсен çулталăкри ĕçсем çинчен отчет çырма пĕлӳ те, опыт та часчасах çитмест. Çавăнпа та Киров облаçĕнче, çулталăкри отчетсене çырнă май, пур районсенче те колхоз председателĕсемпе ревизи комиссийĕсен членĕсен пилĕкхунлăх семинарĕсене туса ирттереççĕ. Çакă вăл тĕрĕс ĕç. Çав семинарсенчен 36 районра кăна 2.911 çын вĕренсе тухнă. Вĕсем унта артелĕн примерлă уставĕн тĕп статьисемпе, колхоз счетоводствипе тата инвентаризаци мĕнле тумаллипе паллашнă.

Юлашки çулсенче нумай районсенче колхозсенчи ревизи комиссийĕсен ĕçĕ çине сахал çавăрăнса пăхма пуçларĕç, хăшпĕр тĕлте çав комиссисем саланса та кайнă. Çакна ниепле те чăтса тăма юрамасть. Ревизи комиссийĕсене çирĕплетмелле, вĕсен ĕçне вăйлатмалла, вĕсене колхоз пурлăхне сыхлакан тата çирĕплетекен шанчăклă органсем туса хумалла. Халĕ, çулталăкри отчета çырнă вăхăтра, кашни ревизи комиссийĕ колхоз правленийĕн хуçалăхпа финанс ĕçĕсене тĕрĕслемелле, правлени ĕçĕ çинчен хăйĕн шухăшне вара артель хуçине — колхозниксен пĕрлехи пухăвне—каласа памалла.

Отчетлă пуху вăл колхоз пурнăçĕнчи пысăк событи пулса тăрать. Отчетлă пухура кашни колхозник тăван çĕршыв умĕне пĕтĕм колхозăн тата хăйĕн ĕçĕ çинчен отчет туса парать. Иртнĕ çулталăк хушшинче тунă ĕçсем çинчен отчет туса парса, вăл колхоз умĕнче 1945 çулта тăракан задачăсене сӳтсе-явас ĕçе активлăн хутшăнать.

Анчах та отчетлă пухусем колхозниксемшĕн çеç мар пысăк событи пулса тăраççĕ. Вĕсене ирттересси вырăнти парти, совет тата комсомол организацийĕсен, çавăн пекех тата ялти мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсен пурнăçĕнчи паха событи пулса тăрать. Отчетлă пухусем социализмлă ялхуçалăхне малалла аталантарас, колхозсем çĕршывпа фронта пулăшнине тата ытларах вăйлатас ĕçре хăватла оруди пулса тăччăр тесе, асăннă организацисемпе çынсен хăйсен мĕнпур организаторла тата политикăллă опычĕпе, хăйсен авторитечĕпе, массăсене хăйсем майлă çавăрма пултарнипе туллин усă курмалла.

(«Правда» хаçатăн умстатьи, январĕн 11-мĕшĕ).

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Пурăнмалли çуртăĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен ăмăртăвĕн 1944 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ пурăнмалли çуртăĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Канашри Колхозник çурчĕ тата Шупашкар хулинчи канализаци отделĕ мала тухнă тесе палăртнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Канашри Колхозник çуртĕнчех хăвармалла тунă тата ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 5.000 тенкĕ укçа панă. Шупашкартри канализаци отделне ăмăртура мала тухнă работниксене премилеме 3.000 тенкĕ укçа панă.

Профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ

ВЦСПС секретариачĕпе ВЛКСМ Центральный Комитечĕ Хĕрлĕ Çар XXVII çул тултарнă тĕле, 1945 çулхи январĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 25-мĕшне çитиччен, профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне ирттерме йышăннă. (ТАСС).

УЗБЕКИСТАНРИ ÇЕНĔ ГИДРОЭЛЕКТРОСТАНЦИ

Ташкент çывăхĕнче Боз-Су каналĕ çинче çĕнĕ пысăк гидроэлектростанци ĕçлеме пуçланă. Вăл станцие Ташкент облаçĕнчи 18 районри колхозниксем васкавлă меслетсемпе тунă. 1800 пин кубометр тăпра кăларнă. Ку ĕнтĕ вăрçă вăхăтĕнче Узбекистанра халăх васкавлă меслетсемпе тунă улттă гидростанцирен пĕри пулать. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем БУДАПЕШТ районĕнче тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, çавăрса илнĕ унка хĕстерсе пырса, главнăй ипподрома (нимĕçсем унта аэродром тунă пулнă), хулари НЕПЛИГЕТ ятлă парка, нефть юхтаракан завода, «Гофкер Шранц» фирмин машинăсем (танксем) тăвакан заводне, хулан ПЕШТСЕНТЭРЖЭБЕТ ятлă районне туртса илнĕ, тăшманран хулан КИШПЕШТ ятлă районне тасатнă. Кун каçиччен пирĕн çарсем хулан 350 кварталне йышăннă.

БУДАПЕШТРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă. Январĕн 8-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче ку районра нимĕçсен 60 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

ДУНАЙ шывĕн çурçĕр хĕрринче КОМАРНО хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, СОЛДИНЫ, НОВАЯ ДЯЛА, СВЯТОЙ ПЕТЕР, ХЕТИН, КРАТКЕ КЕСИ, ИЖА ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ. Январĕн 8-мĕшĕнче ку районра пирĕн çарсем тăшманăн 1.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Январĕн 9-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 18 самолетне персе ӳкернĕ.

ЯНВАРĔН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем КОМАРНО хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре çалăçса, БИНЯ, БАРТ, НОВА ВЬЕСКА, ПЕРБЕТЕ, СТАРАЯ ДЯЛА, МАРТОШ ялĕсене тата НОВА ВЬЕСКА, СТАРАЯ ДЯЛА, ХЕТИН, ТЭГЕЛЬНЯ (КОМАРНО хулинчен икĕ километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), КОМАРНО чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Январĕн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем ку районра 800 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

БУДАПЕШТРА пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен группировкине хупăрласа илнĕ унка хĕссе пынă, тăшманпа çапăçса, БУДАПЕШТ хулин КАПОСТАШМЕДЕР, УЙПЕШТ, РАКОШПАЛОТА, ПАЛОТАУЙФАЛУ, ПЕШТУЙХЕЛЬ, КИШПЕШТ, КОШУТФАЛВО районĕсене, заводсен ЧЕШЕЛЬ ятлă пысăк районне тата суднăсем тăвакан верфьсем вырнаçса ларнă ОБУДАЙ утравне тытса илнĕ. Кун каçиччен пирĕн çарсем БУДАПЕШТРА 1.000 квартал ытла тытса илнĕ. БУДАПЕШТ хули районĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче январĕн 9-мĕшĕнче нимĕçсемпе венгерсен 3.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

БУДАПЕШТРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă. Январĕн 9-мĕшĕнче ку районра нимĕçсен 40 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

☆ ☆ ☆

Комарно хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, совет часĕсем тăшман оборонин тĕрекленĕ паха пунктĕ пулса тăракан Пербете ятлă пысăк яла тытса илнĕ. Тăшманпа çапăçса малалла куçса пырса, пирĕн танкистсемпе пехотинецсем Комарно хулинче Новы Замки хули хушшинчи чугун çул татнă, халĕ тăшманпа Комарно хулине пырса кĕмелли çулсем çинче çапăçаççĕ. Тăшман час-часах контратакăсем тăвать, анчах та совет часĕсем пыра-пыра çаппине пĕр позици хыççăн тепĕрне çухатса пынă каялла чакать. Пĕр соединени боецĕсем кун каçиччен гитлеровецсене пĕр батальона çитти вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн хăй тĕллĕн çӳрекен 4 туппине тата 11 хир туппине пĕтерсе тăкнă. Гвардиçи капитанĕ Паршаков ертсе пыракан подразделени нимĕçсен укрепленийĕсем урлă каçса кайнă та вĕсен перспе тăмалли позицийĕсене атакăланнă. Гвардеецсем тăшман артиллерисчĕсене пĕтерсе тăкнă, 3 тупă, 3 тягач тата боеприпассем тытса илнĕ. Çитĕнĕве малалла вăйлатса пырса, гвардеецсем тăшмантан аякран иртсе кайнă та нимĕçсен тепĕр ушкăнне хыçалтан пырса çапнă. Çак çапăçура гвардеецсем тата 6 тупă, пĕр радиостанци тытса илнĕ, 60 нимĕç салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Будапештра пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкасишĕн çапăçнă. Советсен штурмлакан отрячĕсем нимĕçсене укрепленисенчен хăвала-хăвала кăлараççĕ, хупăрласа илнĕ унка хĕснĕçемĕн хĕссе пыраççĕ. Пирĕн çарсем кун каçиччен хулан пин кварталне ытла туртса илнĕ, çапла вĕсем кун каçиччен Будапештăн 8 районне нимĕççенчен тасатнă. Вăйлă çапăçусем хыççăн совет часĕсем Венгри столицин пысăк промышленноçлă Чепель районне туртса илнĕ. Ку районра тĕрлĕрен 25 завод туртса илнĕ: пăшал завочĕ, патрон завочĕ, моторсем тăвакан завод тата ытти сене те. Хĕçпăшал нумай, 10 паровоз, 100 вагон ытла, 40 трактор тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Кунти çапăçусенче тăшман çынсемне техника тĕлĕшĕнчен пысăк сухатусем тӳсет.

Обудай утравĕнче паян пирĕн çарсем кунти лагерьте ларнă югославсемпе поляксен 500 рабочине ирĕке кăларнă.

* * *

Будапештран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре тăшман тĕрлĕ участокенче çаплах хăйĕн Будапешт хулинче хупăрласа илнĕ группировкине пулăшмашкăн татса кĕме хăтланнă. Пирĕн çарсем нимĕçсен атакисене пурне те ăнăçлăн сире-сире янă. Будапешт хулинчен хĕвеланăçнерехре кĕрешекен соединени чăвашсем çак кун каçиччен 1.200 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, нимĕççен 27 танкĕпе 7 бронетранспортерне çунтарса янă е перспе çĕмĕрнĕ. Тăшман танкĕсене пырса кĕме лайăх пулнă участокра пĕр часрах боецсем улăм купăсем туса хунă. Нимĕç танкĕсем атака пуçласа ярсан, пирĕн боецсем, ракетăсемпе перспе, çав купăсене путтивертсе янă. Вут сутипе нимĕç танкĕсем питĕ лайăх курăнса тăнă. Пирĕн артиллеристсем вара 6 танка çĕмĕрсе тăкнă. Тепĕр районра тăшман çĕрле темиçе хут атака тунă. Пирĕн пехотинецсем, артиллеристсем тата бронебойщиксем гитлеровецсене вăйлăн перспе тăнă, унтан хăйсене хирĕç пырса çапнă та каялла хăваласа янă.

Унти çапăçусенче совет боецĕсемпе офицерĕсем вăрçăри пысăк мастерлăхпа кĕрешеççĕ. Гвардиçи старшăн лейтенанчĕ Заварзин ертсе пыракан стрелковăй рота тăшман атакине сирсе янă чухне 70 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Бойченко сержантăн отделенийĕнчи боецсем, ала вĕçĕн çапăçса, 18 нимĕçе вĕлернĕ. Почапин сержант ертсе пыракан тупă расчечĕ нимĕççен икĕ танкне вут тивертнĕ. Сокоровпа Иванов рядовойсем нимĕçсен ĕывăр танкĕн люкне гранатăсем пăрахнă та, танк сирпĕнсе кайнă. Гвардиçи лейтенанчĕ Курков ертсе пыракан хăй тĕллĕн çӳрекен тупă экипажĕ тăшман бронемашинипе бронетранспортерне çунтарса янă. Гвардиçи сержантчĕ Волков, пулеметпа перспе, 10 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Пултуçк хулинчен кăнтăртараххи старшăй сержант Аненков ертсе пыракан 8 разведчик çĕрле тăшман ĕышăнса тăракан вырăна кĕрсе кайнă, вара вĕсем унта пĕр рăшара засада тунă. Ирхине рашана 5 нимĕç салтакĕ пынă та ĕывăç касма пуçланă. Разведчиксем гитлеровецсене кĕтмен çĕртен тапăннă. Пирĕн разведчиксем виçĕ нимĕçе вĕлернĕ, иккĕшне тыткăна илнĕ. Каç пулсан, разведчиксем тыткăна илнĕ нимĕçсене хамăр чăса илсе тавăраннă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен 10 пин тонна таякан суднине шыва путарнă.

Ывăлĕ патне

ÇАПАÇУРИ ÇАР, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Украинăна ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче танк командирĕ Василий Федорович Шкиль чапа тухнă. Вăрçă çул ытла фронтра кĕрешсе, вăл нимĕçсен 39 танкне, 15 туппине, 26 бронетранспортерĕпе автомашинине, 4 паровозне, боеприпассем тиенĕ 9 эшелонне, ытти тĕрлĕ техникине тата тăшман çыннисене нумай пĕтерсе тăкнă.

Халĕ гвардиçи старшăй лейтенанчĕ Василий Шкиль танк ротине ертсе пырать. 25 çулхи воинăн кăкăрĕ çинче тĕрлĕ орденсем тата Совет Союз Геройĕн «Йăлтăн Çăлтăрĕ» çиççе тăраççĕ.

Унăн ашшĕ Федор Яковлевич та Отечественнăй вăрçăра çапăçнă. Вăл Украинăри 2-мĕш фронтра бронебойщик пулса çапăçнă. Йывăр аманнăй хыççăн госпитальре выртнă. Кайран вара, отпуск илсе, Киев çывăхĕнчи Борисполь хулине канма тавăрăннă. Çакăнта ĕнтĕ вăл хăйĕн ывăлĕ çинчен савăнăçлă хыпар илтнĕ. Сывалса çитнĕ хыççăн Федор Яковлевич хăйĕн ывăлĕ çапăçакан чăса кĕресшĕн пулнă. Вăл ыйткине командовани хапăл тунă.

Çак кунсенче Федор Шкиль рядовой фронта çитнĕ. Кунта ăна хăйĕн ывăлĕ тата унăн паттăр тусĕсем—гвардеецсем хаваслăн кĕтсе илнĕ.

ЭЛЕКТРИЧЕСТВО ВАЙĔПЕ ĔÇЛЕКЕН ÇЕНĔ ПАЧКА

Архангельскри конструктор Харламов электричество вайĕпе ĕçлекен çĕнĕ пачкă шухăшласа кăларнă. Вăл пачкăна вăрмăн хатĕрлес ĕçре анлăн усă курма пулать, мĕншĕн тесен вăл пурĕ те 8 килограмм кăна тăрать. Харламов пачкине ĕçлесе, пĕр çын кун каçиччен 150 кубометр таран вăрман кăсма пултарать. Тăвать пачкă пулсан, пĕр лесопункта çитет. Архангельскри машинăсем тăвакан заводра çавăн пек пачкăсем тума тытăннă. (ТАСС).

Финанс работникĕсен пĕрремĕш кварталти задачисем

Пирĕн çĕршыв çĕнĕ çула — 1945 çула — Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче те, çавăн пекех тылри хĕрӳллĕ ĕçре те çĕнĕ ситĕнӳсем тунипе кĕчĕ.

Иртнĕ çулта финанс ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе те чылай çитĕнӳсем тунă. Государство бюджечĕ вăрçă расхочĕсене витме, çавăн пекех тата промышленноçпа ялхуçалăхне, çĕршывăн культурине малалла аталантарса пыма укçа-тенкĕ кирлĕ таранах парса тăчĕ. Çĕршывăн финанс ресурсĕсене ӳстерес тĕлĕшпе партипе правительство йышăннă мероприятисене пирĕн республикăра та ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынă. Государствăн виççĕмĕш военнăй заемне, укçапа япаласен тавăрăмĕш лотерейне билечĕсене пирĕн республикăри ĕççыннисем хушшинче, пĕтĕм Совет Союзĕнчи пекех, çĕкленӳпе тата пулăртнă вăйсенпе ытларах сарнă. Оборотран илекен тата тупăшсенчен илекен налогсен укçине пухмалли плана та чылай иртерсе тултарнă.

1944 çулхи финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх вăхăтĕнчи ĕçсем укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарма кирлĕ условисемпе майсем пирĕн çителĕклĕ таванах пурринне кăтартса пачĕç. Финанс работникĕсем куллен тимлĕн ĕçлесен тата партипе совет организацийĕсем вĕсен ĕçне тăвăшах тĕрĕслесе пырсан, ĕçре пулăшу парсан, финанс планне пĕтĕмпе кăна мар, кашни тӳлев тăрăх вăхăтра тата ытлашшипех тултарма пулать. Финанс органĕсен 1944 çулта пухса çитермен парăмсене январь уйăхĕнче пухса пĕтермелле, государствăн виççĕмĕш военнăй заемĕн тата укçапа япаласен лотерейĕн укçине пĕтĕмпех пухса хывмалла тăвас пулать. Страховани ĕçне малалла вăйлатас, перекет кассисен ĕçне лайăхлатас, государство дохочĕсен планне кашни районта та хула тăрăх тултарас, халăхран самообложени укçине пухас тата ытти тĕлĕшпе те хăвăртлăхсене татăклăнах ӳстермелле.

Январь уйăхĕ иртнĕ çулхи отчетсене тимлĕн тапхăр пулса тăрать. Ку ĕç питех те кирлĕ. Финансла бюджет тата хуçалăх учрежденийĕсенчи шутĕр работникĕсен хальĕ отчетсем тăвас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемелле. Учрежденисен руководителĕсем çав ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăмалла, шутĕр работникĕсем валли ăнăçлăн ĕçлеме условисем туса памалла. Çапла вара отчетсене лайăх тата вăхăтра хатĕрлесе çитермелле.

Тепĕр пысăк ĕç вăл—1945 çулхи бюджета хатĕрлесси. Ял Совечĕсен бюджечĕсене пур районсенче те январĕн 1-мĕшĕнчен çирĕплетмелле пулнă. Анчах та районсенчи финанс отделĕсен тата райсовет исполкомĕсен сӳрĕклĕхне пула, çав ĕç питех те ерипен пулса пырать.ха. Çавăн пекех районсен бюджечĕн проектне тăвасси те вăраха юлса пырать. Районсенчи финанс отделĕсен тата райсовет исполкомĕсен район бюджетне тăвас ĕçе татăклăнах хăвăртлатмалла.

Пирĕн çĕршыва фронт расхочĕсене витме тата халăх хуçалăхне малалла аталантарса пыма кăçал укçа-тенкĕ тата ытларах кирлĕ пулать. Çакă вăл финанс работникĕсенĕ укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тата пысăк пахалăхпа тултарса пыма, пур тупăшсене те хисепе илме, государство укçа-тенкине перекетлессишĕн тăрăшма, тирпейсĕрлĕхе пĕтерме хушать. Çак ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырас тесен, контроль ĕçне татăклăнах лайăхлатни кирлĕ.

Финанс планне квартал пуçламĕшĕнчен тытăнсах ăнăçлăн тултарса пырса, нимĕç тискер каййăкне хăйĕн шăтăкĕнчех пĕтерсе тăкма çĕршыва укçа-тенкĕ çителĕклĕ пирса тăрар!

И. ЗОЛОТНИКОВ.
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Будапештра

Хупăрласа илнĕ Будапешт çинче пĕр чăрăнмасăр пăшал-тупă сасси кĕмĕртетет. Сивĕ сывлăшра çурăлакан снарядсем çăтăртатса илеççĕ. Тупăсенчен пенипе хула чĕтресе тăрать. Вăхăтран вăхăта вăйлă взрывсем пулса иртеççĕ. Ку ĕнтĕ урса кайнă нимĕçсем Венгри столицин чи лайăх çурчĕсене, унăн историпе культура тĕлĕшĕнчен хаклă япаласене аркатнине пĕлтерет.

Нимĕçсемпе венгер çарĕсенчен квартал хыççăн квартал тасатса пырса, совет часĕсем Будапешт хулин центрне çывхарса пыраççĕ. Унта пĕр çĕрелле пухăнакан урамсем Дунай шывĕ хĕррине, Дунай урлă хывнă кĕперсем патне пырса тухаççĕ.

Хупăрласа илнĕ тăшман группировки гавра кăшăл хĕсĕннĕçемĕн хĕсĕнсе пырать. Будапештри тăватă пин çурă кварталтан совет çарĕсем пин çурă квартална ытла тытса илнĕ. Кашни кварала, кĕтесри кашни çурта, кашни подвала, кашни чердака çапăçса илме тивет.

Сталинградпа Харьков, Одессăпа Севастополь хулисенчи урамсенче пулса иртнĕ çапăçусенче туяннă опытпа совет воинĕсем Будапешт хулинче хаярлăн çапăçнă çĕрте усă кураççĕ.

Сапожниковпа Лежнев красноармеецсем хăйсен батальонĕ валли наступлени тума çул шыранă чухне Венгри салтакĕсен засади çине пырса тухнă. Боецсем вĕсем патне шуса пынă та парăмна хушнă. Лешсем çапла ответленĕ: эпир тыткăна парăннă пулăттăмăр та, анчах тухма пултараймастпăр, мĕншĕн тесен пирĕн умра йĕплĕ пралук карнă тата унта минăсем лартса тухнă. Сапожниковпа Лежнев, тăшман салтакĕсене хăйсен хĕçпăшалне пăрахса аякламалла парăнма хушнă та, йĕплĕ пралук патне шуса, пырса унта тухмалли хушăк тунă, вара Венгри салтакĕсене пурне те тыткăна илнĕ.

Будапештра çапăçакан совет çарĕсем, хулара хупăрласа илнĕ нимĕçсемпе венгерсен группировкине пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе çапăçса, паян татах 350 квартал тытса илнĕ. Совет боецĕсем çавăн пекех фашистсем аэродром туса хунă главнăй ипподрома, хулари Неплигет ятлă парка, нефтьпе тĕрлĕ япаласем тăвакан завода, машинăсем (танксем) тăвакан завода, хулан Пештсентэржбет районне тытса илнĕ тата Кишпешт районне тăшмантан тасатнă.

П. ЛУКНИЦКИЙ.

БУДАПЕШТ РАЙОНЕ, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ).

ВАТА СОВЕТ КОМПОЗИТОРĔН ЮБИЛЕЙĔ

Мускаври музыка общественноçĕ совет композиторĕсенчен чи ватти, Совет композиторĕсен совечĕн председателĕ СССР Халăх артисчĕ Р. М. Глиэр çуралманранпа 70 çул тултарнине палăртма хатĕрленет.

Юбиляр виçĕ симфони, симфонилле темиçе поэма, 5 увертюра тата инструментла малламалли, юрласа памалли нумай произведенисем çырнă. Глиэр Совет Союзĕнче тата ют çĕршывсенче лартăкан «Красный мак» ятлă пирвайхи совет балечĕн авторĕ пулса тăрать.

Нумай çулсем хушши наципе республикăсен музыкăллă фольклорне вĕренсе пынипе, Глиэр азербайджансенсен «Шах-Сенем» тата узбексен «Гюлсара» ятлă операсене çырнă.

Вăрçă кунĕсенче Глиэр творчестви малтанхи пекех пĕр чăрăнмасăр аталанса пырать. (ТАСС).

Ял Совечĕсем валли кадрсем хатĕрлесси пирки

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче ял Совечĕсен выраньне тухăç лăхне ӳстерме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме тата государство умĕнчи парăмсене вăхăтра пурнăçлама мобилизацилеççĕ, колхозсен тата совхозсемпе усă курма пулăшаççĕ. Ял Совечĕсем фронтовиксен семьисемпе вăрçă инвалидĕсене пулăшас, хăлăх сывлăхне упрас, хадăха çутта кăларас тата ытти нумай ĕçсене ертсе пыраççĕ.

Юлашки çулсенче ял Совечĕсен председательĕсем, секретарĕсем пулса ĕçлеме çĕнĕ çынсем нумай пынă. Çавăнта та халĕ ĕсене вĕрентес тĕлĕшпе куллен тăрăшмалла.

РСФСР Совнаркомĕ 1944 çулхи апрелĕн 8-мĕшĕнче йышăннă постановление пурнăçа кӳртес май, Чăваш АССР Совнаркомĕ ял Совечĕсен председательĕсен вунă уйăхлăх курсне организацилерĕ. Иртнĕ çулта çав курсран ял Совет председательĕсем 74 çын вĕренсе тухнă. Вĕсем халĕ пурте тенĕ пекех ял Совечĕсен председательĕсем пулса ĕçлеççĕ. Нумайĕшĕсем ĕнтĕ хăйсен тултарулăхне кулленхи ĕçре кăтартса параççĕ.

Ахă, Канаш районĕнчи Аслă Пикшик ял Совет председательне Васильева юлташа илер. Вăл ял Совет председателĕсен курсĕнче вĕренсе тухнă хыççăн ялан ĕçлекен комиссенсен ĕçне лайăхлатнă. Халĕ ял Совет исполкомĕн пĕтĕм ĕçне çав комиссисем урлă туса пырать. Унта ял Совет депутачĕсене те ĕçе активлăн явăçтараççĕ. Çавăн пекех Йĕпреç районĕнчи Андреевка ял Совет председателĕ Антонова юлташа та курсран вĕренсе тухнă хыççăн ял Совет исполкомĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатнă. Унта суту-илӳ, бюджет тата ытти комиссисем организациленĕ. Ял Совет ĕçне активлă анлăн явăçтараççĕ.

Кăçал ял Совет председательĕсен курсĕнчен 200 çын вĕрентсе кăлармалла. Çак ĕçе пурнăçлас тесен, райсовет исполкомĕсен курса вĕренме яма кандидатсем суйласа илес ĕçе лайăхлатмалла. Анчах та хăшпĕр райсовет исполкомĕсем çав ĕç çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ-ха. Пĕрремĕш кварталта курсра вĕренме Шăхасан районĕнчен 2 çын, Елчĕк районĕнчен 3 çын, Вăрнар районĕнчен 3 çын, Чкаловски районран 2 çын ямалла пулнă пулсан, вĕсем, курса вĕренме ямалли çынсен автобиографийĕсене хатĕрленисĕр пуçне, урăх нимĕн те туман. Октябрьски, Элĕк, Советски, Хĕрлĕ Чутай районĕсем те вăл тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Ку ĕнтĕ асăннă райсовет исполкомĕсем ял Совечĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн çителĕксĕр тăрăшни çинчен каласа парать. Кун пек йăлана тĕпренех пĕтермелле. Кирек мĕнле ĕçе пурнăçа кĕртесси те кадрсенчен килет. Çавăнпа та кадрсен пĕлӳлĕхне ӳстерес енĕпе тинлĕн тăрăшмалла.

Ял Совечĕсен авторитетне ӳстересси тата вĕсен ĕçне лайăхлатасси ял Совет исполкомĕн председательĕнчен нумай килет. Председатель хăйĕн тивĕçне ăнăçлăн пурнăçлама пултараймасть пулсан, темĕнле лайăх решени йышăнни те ĕçе юсама пулăшмасть. Пачах урăхла, ял Совечĕн председательĕ активпа сыхăнса ĕçлеме, хăйĕн тивĕçне лайăх пурнăçа кĕртсе пыма пĕлет пулсан, ял Совечĕн исполкомĕ те йăнăçлăн ĕçлеме пултарать. Çакăн çинчен пĕр минутлăха та манмалла мар.

П. СКВОРЦОВ.
Ял Совет председательĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи курсĕн директорĕ.

Колхозри конюхсене пулăшас майпа

Лашасен йышпе ӳстерес тĕлĕшпе тумалли чи кирлĕ ĕç

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче «Колхозсемпе совхозсенче лашасен йышне ӳстермелли тата вĕсене пăхса усрас ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление çапла çырнă: «Лашасен йышне хăвăртрах ӳстерес тесе, 1943 çултан пуçласа колхозсемпе совхозсен, çавăн пекех мĕнпур предприятисемпе организацисен 3 çултан иртнĕ, хăмлама пултаракан кĕрисене обязательнăй йĕркепе чуптармалла», тенĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине çак вăхăта çитсе те чылай колхозсенче кирлĕ пек пурнăçласа пымаççĕ-ха. Кĕрсесене чуптармалли плана иртнĕ çул республикăра 6 район (Вăрнар, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Вăрмар тата Етĕрне районĕсем) çеç пурнăçланă. Çак районсенче лаша èртетес енĕпе ĕçлекен инспекторсемпе зоотехниксем тата ветеринарсем чуптару кампанин пĕлтерĕшне аван ăнланса илнĕ. Вĕсем колхозсене чуптару кампанине лайăх хатĕрленсе ирттерме пулăшнă.

Етĕрне районĕ кĕрсесене чуптармалли плана иртнĕ çул 102 процент пурнăçланă. Ку районра кĕрсесене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пункт лайăх ĕçленĕ. Çак пункта лашасем енĕпе ĕçлекен госинспектор Токсубаев юлташ аван ертсе пынă. Вăл тăрăшнипе пункт иртнĕ çулта хăйĕн планне 105 процент пурнăçланă.

Кĕрсесене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли плана иртнĕ çул пирĕн республикăра нумай тĕлте тултарнă. Анчах та уйăм пунктсем çителĕксĕр ĕçленĕ.

Кĕрсесене чуптарас енĕпе уйрăмăнах Шăмăршă, Калинино, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай районĕсем кайра пычĕç. Çак районсем плана 62—76-шар процент çеç тултарнă. Ахальтен мар ĕнтĕ çак районсем иртнĕ çулта вăтам шутпа 100 кĕсьерен 20 тиха кăна илнĕ.

Кĕрсесене чуптарса хăвармалли плана тултарманни, пуринчен ытла, çак ĕçе колхоз руководителĕсем хакламанинчен килет. Кĕрсесене тата ăйăрсене колхозсем чуптару кампанийĕ тĕлне çителĕклĕ таран хатĕрлемелле. Вăйсăр, ирхан кĕрсесене чуптару кампани умĕн вăйлă апат çине, ăйăрсене канма тăратман тата хĕшпĕр колхозсенче ăйăрсене чуптару кампани вăхăтĕнче те кӳлсе çӳренĕ.

Кĕрсесене чуптарса хăварасси çинчен кăларнă инструкци тăрăх, чуптару кампанийĕ майăн 1-мĕшĕне июлĕн 15-мĕшĕ хушшинче иртмелле. Çак хушăра хĕсĕр юлнă кĕрсесене тата хăмлана кĕрсесене пурне те чуптарса хăварсан, лайăх тиха илме пулать. Кĕрсесене лайăх ăйăрсемпе чуптарса хăварсан, лайăх тиха илме пулать.

Чуптару кампанийĕ лашасене ĕрчетес енчен те, хуçалăх енчен те ответлă кампани пулса тăрать. Çак кампание республикăри кашни районăн, кашни колхозăн тĕплĕн хатĕрленсе, лайăх ирттерме тăрăшмалла.

М. МЕЛЬНИКОВ,
ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарисĕн лашасем енĕпе ĕçлекен управлени начальникĕ.

Кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕç ялăх пырать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, январĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхоз кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе кунта нимĕн те туман-ха. План тăрăх, районри çĕрĕç пайĕн 250 çынна курсран вĕрентсе кăлармалла. Ку шута конюхсем, фермăсен заведующийĕсем тата бригадирсем кĕреççĕ. Анчах та районри çĕрĕç пайĕ, çурт çук тесе, ку таранччех те бригадирсен, ферма заведующийĕсен курсне ӳсман. Çак иртнĕ кунсенче пурĕ те 25 конюха çеç вĕрентсе кăларнă.

Районра пурĕ 88 колхоз. Çак колхозсенче пуринче те агротехниксене, акакансене, сухаçăсене, яровизаторсене тата ытти специалистсене те агрокружокран вĕрентсе кăлармалла. Апла пулин те, райĕçĕрĕç пайĕ (заведующийĕ Скворцов) пĕр конюхзра та агрокружок ӳсман.

Районра ялхуçалăх специалисчĕсене пĕрентес ĕç начар пыни пĕтĕмпех райĕçĕрĕ; пайĕнчи агрономсем ку ĕçпе колхозсене тухса çӳременнинчен, вĕсем агрокружоксем организацилес тата вĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе нимĕн те туманнинчен килнĕ. Кăçал район ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе республикăра пĕрремĕш вырăна тухма шутланăччĕ. Анчах та пĕрремĕш вырăна тухас тесен, кадрсене ытлах вĕрентсе хатĕрлес пулать.

С. ШАДИН.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе каларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Маас шывĕн хĕвеланăç хĕрринче Баносемра (Голтанди) тăш. манăн нумаях пулмасть туса хунă позицине аркатса тăкнă. Арден савăлĕн çурçĕр флангĕнче Сальм шывĕн хĕвеланăç хĕрине Вильсальма çитиччен тăшмантăн тасатнă. Союзниксем Сен-Вит-Ларош çулĕ районĕнче çирĕпленсе ларнă. Грамменильтен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Дошана йышăннă. Урт шывĕн хĕвелтухăç çыранне Маркура çитиччен тăшмантан тасатнă, союзниксен çарĕсем Маркур хулине тытса илнĕ.

Арден савăлĕн кăнтăр флангĕнче Бонрю хулине тăшмантан тасатнă. Сент-Юбертан 6 миля хĕвелтухăçнерехре лараканскер, вăл юлашки кунсенче икĕ хутчен вăраи алла куçнă. Тильерен хĕвелтухăçнерехре тăшман вăйлăрах та вăйлăрах хирĕç пăтăрать.

Союзниксен çарĕсем, Сааргемюндран хĕвелтухăçнерехре 8 миля таран малалла куçса, Рихлингена тытса илнĕ. Анатри Богезара союзниксем Витш хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр миля çурă малалла кайнă.

Страсбургран кăнтăртарахра тăшманăн танковăй часĕсемпе пехоти активлăн кĕрешнĕ.

700 ытла йывăр бомбардировщик, 200 истребитель хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн Германири. Вельгири тата Люксембургри чугун çул объекчĕсене тапаннă.

Январĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин 800 бомбардировщикĕ ытла Мюнхена тата Германири ытти хуласене икĕ хут пырса тапаннă.

БЮДЖЕТ ЫЙТАВЕ ПИРКИ РУЗВЕЛЬТ КОНГРЕСА ЯНА ÇЫРУ

ВАШИНГТОН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Çулталăкри бюджет ыйтăвĕ пирки конгреса янă çырура Рузвельт наци экономикин программине тата экономика ыйтăвĕсем тăрăх тĕнчери çыхăнусен программине калаçа панă.

1945 çулхи июль уйăхĕнче пуçланакан бюджет çулĕнче Рузвельт тăкаксене 83 миллиард доллар чухлĕ çирĕплетме сĕнет. Халхи бюджет çулĕнче, июнĕн 30-мĕшĕнче вĕçленекенскерĕнче, 97 миллиард доллар тăкаклама палăртнă. Президент калăнă тăрăх, ку цифрăсем малтанлăха палăртса хунă цифрăсем кăна пулса тăраççĕ. Çитес бюджет çулĕнче чăннипе мĕн чухлĕ тăкаклăмалла пуласси вăрçă мĕнле пынинчен килет, тенĕ.

«Эпĕ,—тенĕ çырура,—вăрçă хăçанччен пырасси пирки ку тапранччен нимĕн те каламанччĕ, халĕ те калаçăмăр. Эпĕ çапла кăна калама пултаратăп: эпир хĕрнех арканса тăкăпăр. Тĕрлĕ майлă шухăшласа пăхнă тăрăх, çитес бюджет çулĕнче вăрçă валли каякан тăкаксене эпĕ, малтанлăха шутласа хунă тăрăх, 70 миллиард çирĕплетме сĕнетĕп. Вăрçăпа çыхăнса тăман ĕçсем валли Рузвельт 13 миллиард доллар çирĕплетме сĕнет.

РУЗВЕЛЬТ ТАТА ЧЕРЧИЛЛЬ ШЫВ АЙĔНЧИ ВĂРÇА ПИРКИ ПĔРЛЕ КАЛАСА ПАНИ

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтерĕ тăрăх, шыв айĕнчи вăрçă декабрь уйăхĕнче мĕнле пыни çинчен Рузвельтпа Черчилль иккĕш пĕрле çапла каланă:

«1944 çулхи декабрь уйăхĕнче Германи шыв айĕнче çĕнĕрен вăйлă сапаçма пуçланă. Ку ĕнтĕ Европăри вăрçă вĕçленменнине кăтартса парать. Официальнă шутласа тухнă тăрăх, тăшманăн подводнăй лодкисем иртнĕ уйăхра союзниксен суту-илӳ карапĕсене инченхинчен ытларах путарнă. Апла пулин те, Пĕрлешӳллĕ Нацисем пĕтĕм тĕнчипе сапаланса пĕтнĕ хăйсен çарĕсене кирлĕ хатĕрсем вăхăтра çитерсе тăраççĕ, тăшман тапăнине хирĕç тăма е тăшмана тапăнма май параççĕ. Союзниксем тăшманăн подводнăй лодкисене Атлантика океанĕн тĕрлĕ кĕтессисенче путарса пыраççĕ. Мэн штачĕн çыранне подводнăй лодка çинчен тăшман агенчĕсем тухни Германин шыв айĕнчи флочĕ малтанхи пехăрушă пулса тăнине пĕлтерет».

ДАНИ ПАТРИОЧĔСЕН ХАЮЛЛА ЕÇĔ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Швеции радио çапла пĕлтерет: Стокгольмра илнĕ хыпарсем тăрăх, çак кунсенче Дани патриочĕсен ушкăнĕ Копенгаген хулинчи почтăн тĕп станцине хĕвеллăн пырса тапаннă. Патриотсем Дании гестапо ячĕпе тата таможня управленийĕ ячĕпе килнĕ темиçе михĕ çырăва илсе кайнă. Çав михĕсенчен пĕринче пĕр чек тупнă. Вăл чека Германи ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви хушнипе Дании наци банкĕ 250.000 кронăлăх темле Бек доктор ячĕпе сыснă.

Стокгольмри датчансен ушкăнĕнче калланă тăрăх, почта миххисенче тупнă чи паллă документсене кĕнеке туса вăрттăн кăларма шутлаççĕ.

РУМЫНИРЕН СОВЕТ ПУРЛАХНЕ КАЯЛЛА ТАВАРНИ

БУХАРЕСТ, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни оккупанчĕсем çаратса кайнă совет пурлăхне Совет Союзне каялла тавăрса параççĕ. Кăçалхи январĕн малтанхи виçĕ кунĕ хушшинче Совет Союзне 248 вагон промышленность оборудованийĕ, выльăх-чĕрлĕх тата тĕрлĕ материалсем тавăрса панă. Румынсен аллинче пулнă вăхăтра снеменĕ совет пурлăхне СССР-а тавăрса париччен юсаççĕ. Сăмахран, декабрĕн 31-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 3-мĕшне çитиччен 397 тĕрлĕ ялхуçалăх машинине юсанă.

Анчах та Совет Союзĕнчен çаратса илсе кайнă совет пурлăхне уйрăм çынсемпе организацисем пытарса хăварма хăтланни халĕ те пĕтмен-ха. Январĕн 6-мĕшĕнче Совет Союзĕнчен çаратса илсе кайнă тавăрсемпе складсене тупнă. Вăл складсенче 13 вагон сахăр, 400 бак авиаци çăнĕ, 11 тонна ясмăк-пăрçа тата ытти тĕрлĕ пурлăх та пулнă.

СОВЕТ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ФРАНЦИРЕ

ПАРИЖ, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агенстви çапла пĕлтерет: Совет профсоюзĕсен делегацийĕ январĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа 15-мĕшне çитиччен Франçин провинцийĕсенче пулмалла. Икĕ ушкăна уйăрăлса, делегатсем Франçин промышленноçлă хулисенче пулаççĕ. Пĕтĕмĕшле Ес Конфедерацине кĕрекен профсоюзсем организацилекен митингсенче сăмахсем тухса калаççĕ. Пĕтĕмĕшле Ес Конфедерацийĕ январĕн 17-мĕшĕнче Парижри хĕллехи велодромра пысăк митинг туса ирттерет. Вăл митингра совет делегацийĕ Парижри ĕçхалăхĕ умĕнче сăмах тухса калать.

ФРАНЦИН ПĔТĔМЕШЛЕ ЕÇ КОНФЕДЕРАЦИЙĔН ДЕЛЕГАЦИЙĔ МУСКАВА ВĔÇСЕ КАЙНĂ

ПАРИЖ, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтерĕ тăрăх, СССР-ти профсоюзсем чĕнипе ĕнер Пĕтĕмĕшле Ес Конфедерацийĕн делегацийĕ Мускава вĕçсе кайнă. Делегаци составне Пĕтĕмĕшле Ес Конфедерацийĕн секретарĕсем—тăшмана хирĕç кĕрешекен Халăх Совечĕн председателĕ Луи Сайан, Фрашри та, та Газье кĕреççĕ.

ГЕРМАНИРЕ АЧАСЕНЕ МОБИЛИЗАЦИЛЕÇÇЕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтерĕ тăрăх, ĕç вăйĕ ытла нумай çитменнипе, гитлерла влаçсем нимĕçсен 12—14 çулхи ачисене ĕçлеме мобилизацилеççĕ. Çав ачасене почта учрежденийĕсенче тата ытти ведомствăсенче ĕçлеттереççĕ, мĕншĕн тесен «Тотальнăй мобилизаци» туса ирттернипе çав учрежденисенче çынсем питĕ сахал юлнă.

Греции лару-тăру

ЛОНДОН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Англи çарĕсем, Афины хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре 35 миля таран малалла куçса, Фивы хулине йышăнса илнĕ. ЭЛАС çарĕсем вăйлах хирĕç тăман. Афины хулинче çуртсенче пытарнă хĕçпăшала тупас тесе ухтараççĕ.

ЛОНДОН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 1-мĕшĕ тĕлне, урăхла каласан, Афины хулинчен тухса кайиччен 4 кун малтарах Афины хулинче пулнă ЭЛАС çарĕсем 13 пин çын çухатнă, вĕсенчен 12 пине яхăн тытăкăна лекнĕ. Çав шутран 8 пин çын янчах ЭЛАС çарĕнче пулнă, тесе шутлаççĕ.

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Афины хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: акăлчансен бронетанковăй колонни Афины хулинчен 70 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Левадие çитнĕ. Хулана пырса кĕнĕ акăлчансен патрульĕ партизансем хуларан тухса кайнине шăлăртнă. Акăлчансен иккĕмĕш колонни, Фивы хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле кайканскер, Халкидăран 4 мильăра тăрать.

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх. Скоби генерал ЭАМ-ăн 4 делегатне йышăннă.

Афины хулин çар губернаторĕ çапла пĕлтернĕ: Афины хулинче тата Пирейре кăçхине килтен тухма юрамасть. Çавăн пекех Афины хулине пырса кĕрекен е унтан тухса каякан транспорта кашнинех ухтармалла.

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Афины хулинчен çапла пĕлтерет:

«Официальнăй йĕркепе кунта çакă паллă пулнă: ЭАМ представительĕсем Скоби генерал патне пĕр-пĕр сĕнӳ памăр, Скоби генералтан перемири условийĕсене ялме, май килсессĕн вăл условисене ЭАМ-ăн Центральнăй Комитечĕ ячĕпе йышăнма пынă». ЭАМ представительĕсем Англи командованийĕн ставкинчен инçе мар ларакан отельре çĕр каçнă. Паян каласусем çĕнĕрен пуçланнă.

ЛОНДОН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Афины хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Грецин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Софианопулос Греци правительстви ЭАМ-па ЭЛАС пуçлăхĕсене арестлеме ордерсем панă тесни суя хыпар, тесе пĕлтернĕ. «Апла пулин те, —тенĕ корреспондент.—паян эпĕ полици начальникĕпе тĕл пултăм. Вăл мана çапла каларĕ: ЭАМ тата ЭЛАС пуçлăхĕсене арестлеме ордерсем чăнахах та панă, терĕ».

ЛОНДОН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчи «Элефтерия» хаçатăн пĕлтерĕвне парать. Унта çапла каланă: Греции коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн хăшпĕр членĕсене хăрушăрлăхăн специальнăй службин органĕсем арестленĕ, тенĕ.

ЛОНДОН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат çине кăтартса. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: январĕн 7-мĕшĕнче, пичет представительĕсене пухса, Пластирас генерал çапла каланă. «Пăлхавăçăсем» (ЭЛАС чăçĕсем) хĕçпăшала пăрахма хушнине йышăнмаççĕ пулсан, вара эпĕ вĕсене пĕтерекен çар пуçне тăратăп, тенĕ. «Афины хулине тасатнă хыççăн пĕтĕм Грецие пăлхавăçсенчен тасатас ĕçе хам алла илнĕ хыççăн,—тенĕ Пластирас,—пĕтĕм çĕршывра власть туса хума мана темиçе эрне кăна кирлĕ пулать».

АНГЛИ ПИЧЕЧĔ ПЛАСТИРАС КАЛАНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Манчестер гардиан» хаçат умстатьяра çапла çырать: Грецирен килекен хыпарсем «пуçа анратаççĕ тата вĕсене ĕненме те май çук». «Сарлака никĕс çинче тăракан правительство туса хурас вырăнне, — çырать хаçат,—эпир Пластирас генерал правительствине куратпăр. Вăл правительствăна 5—6 çын кăна пулăшса тăраççĕ. Пластирас правительстви ЭАМ-па ЭЛАС-а аркатса тăкма пĕтĕм Греци территорийĕнче хĕçпăшаллă вăйпа усă курма шутланăн çинчен тата çав организацисен представителĕсене правительствăна кĕртессишĕн пулманни çинчен уссăнах калать. Черчилльпе Иден анлă никĕс çинче тăракан правительство туса хума кирли çинчен каланăччĕ-çке. Ку çеç те мар, Пластирас генерал «пăлхавăçсене» наказани парасси çинчен пĕлтернĕ. Ку ĕнтĕ Иден каланине пĕтĕмпех хирĕç пырать. Иден çапла каланăччĕ: «Репрессисене чарса лартас тĕлĕшпе мĕн май килнине эпир пĕтĕмпех тума пултăпăр», тенĕччĕ. Паллах, çак япалана йăлантарса памаллах.

Пластирас калани пирки «Дейли геральд» хаçатра Юэр çапла çырать: Скоби малтанхи пекех вăрçа каласса татăлнине пĕтерсе лартасшăн пулсан, Пластирас ЭЛАС-а пĕр сăмахсăр парăнтарасшăн. «Пăрçă ĕçĕсем тĕлĕшпе те, политика тĕлĕшпе те Пластирас Англи правительствин политикине хирĕç пыни паллах», тесе çырать Юэр.

«Дейли геральд» хаçатăн Афины хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Греци полицийĕ ЭЛАС членĕсене тата çав организацире тăрать тесе шутлакан çынсене хытă тытăкалать. Корреспондент çапла калать: «Çапăçусем вăхăтĕнче тытăкăна лекнĕ çынсене, вăл шутра çар çынни марисене те, вĕсен политикăллă ĕçĕсене паллăртас, шутпа Греци разведки тĕрĕслет».

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ЯПОНИЕ ТАПАННИ

ВАШИНГТОН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен «Вĕçекен крепость» йышши вăйлăран вăйлă бомбардировщикĕсем паян Японин Хонсю тата Формоза утравĕсем çинчи промышленноçпа çар объекчĕсене тапаннă.

ТОКИО, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Формоза утравне паян американецсен 450 самолечĕ ытла тапаннă.

КĔСКЕН

▲ Германие тухса тарас умĕн Петэн пĕр çĕре чи паха документсем хунă ещĕк пытарса хăварнă. Вăл документсем хушшинче Петэн, Лаваль, Дарлан тата Ногес сыркă сырусем, Виши «правительствин» сутăнчăкне ĕçĕсене палăртаканскисем, пулнă. Нумаях пулмасть вăл документсене тупнă та фотографипе ӳкерсе илнĕ. Сывăхри кунсенчех ун çинчен Франçири министрсен совечĕн ларăвĕнче доклад пулмалла.

▲ Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн часĕсем 1944 çулта тăшманăн 55.615 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăхнă. Кунсăр пуçне, çар техники тата боеприпассем нумай аркатса пĕтернĕ.

Тăван çĕршĕн

Вăрçă хирне кĕнĕ чухне Терентий Константинов рядовой салтак пулнă. Халĕ вăл рота командирĕ. Иртнĕ виçĕ çул хушшинче вăл нимĕçе хирĕç Шлиссельбург, Мга таврашĕсенче, Нарва таврашĕсенчи шурлăхсенче, Пулково сăрчĕсен айлăмĕнче, Карели перешеекĕнче çапăçнă.

«Акă,—шутланă вăл,—какăр çинче сакăр хĕрлĕ лента, а награда пĕрре те çук. Апла, эсĕ, лейтенант, япăх çапăçатăн-ха. Самра паттăр çар çыннине курмаççĕ».

Боецсем ун çинчен пачах урăхла шутланă. Шăйса пăрланнă блиндажра, шурлăх шывĕпе кӳлленсе тăракан канавра, вилĕм кӳрекен тупă йĕтрисем, миначсем айĕнче, çĕрлехи бомбардировщиксĕн çĕре кисрентерсе яракан бомбисем айĕнче унпа юнашар выртнисем пурте ун çинчен ырă кăмăллă аса илнĕ.

Вăл, вăрçăччен шыв çул парохочĕн капитан помощникĕ пулса ĕçленĕскер, начальниксем хушнисене вăхăтра тата тирпейлĕн пурнăçлама хăнăхса çитнĕ, çавăнпа кунта, вăрçăра та, аслисене итленĕ, хăйне пăхăнакансене те çавăн пек пулма вĕрентнĕ.

Акă халĕ те, вĕтлĕх вăрман витĕр утса хăйĕн боецĕсем патне сывхарса пынă чухне, вăл мĕнпурĕ те пĕр ĕç çинчен, тăшман аллинчи сăрта мĕнле те пулсан сахал çухату тусах ярса илесси çинчен шутланă, ăшра тĕрлĕ плансем тунă.

Ана хирĕç вĕтлĕхрен кĕрĕн лейтенант Сергей Бойденко чупса тухсан, Константинов унăн ыйхăллă пит-куçĕ çине тимлесе пăхнă.

— Санăн сăнпуç паян ытла тирпейсĕр, кĕрĕн лейтенант. Мана ĕнен, япăхи нимĕн те пулас çук. Нимĕç çине простă, халичченхи пекех тапăнса кайăпăр та, пурте лайăх пулĕ.

— Эпĕ? Çук... — именсе ответленĕ Бойденко.—Пурте пит лайăх пулĕ, лейтенант. Пирвайхи хут мар вĕт?

— Акă мĕн. Ку ĕçе халех тăвас пулать. Куратăн-и?—тесе тĕллесе кăтартнă Константинов сăрт еннелле.—Астуман та, ара, эсĕ унта пулнă вĕт-ха? Çапла, çав канава хăвăн çынсене халех, пĕр шав-чĕвсĕр илсе тух. Ытти çинчен вырăнта калăп...

* * *

Боецсем, вăрçă вут-хĕмĕн шавĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пынине итлесе, йывăç тураттисем сарнă канавăн тĕпĕнче шупка-кăвак тӳпене пăхса выртнă.

Тăшман енчен ула-ула вĕçсе килекен миначсем канавран темиçе утăмра ӳке-ӳке çурăлипе вĕсен ӳт-пĕвĕсем хăйсене-хăйсемех чĕтре-чĕтре илнĕ.

Лейтенант Терентий Константинов, боецсем çывăхĕнчен пĕшкĕнсе чупса иртсе, канав хĕрринче выртакан пысăк чул хыçне Бойденкопа юнашар пырса выртнă.

— Куратăн-и, сăнама епле лайăх ку вырăнтан? Хӳтлĕх те япăх мар,—сăмах хушнă Константинов. Унтан, кăшт тăхтасан:

— Тĕрĕссине кала, Сергей: туйăмсем, шухăш-кăмăлсем епле санăн çак самантра? Чĕмере пĕлет-и, тен, эпир пĕр-пĕрне урăх курăймăпăр та...

— Аптăрамастăп-ха. Кашни самантрах çакăн пек кăмăл-туйăм пулма турă пуласлăштăрччĕ. Шутласси... Мĕнех шутлап-ха эпĕ? Сана анчах калатăп. Пĕр тус пур манăн. Унпа пĕрле эпир Киев çывăхĕнче çăтăм шкулта вĕренсе. Пĕлетĕн-и, епле илемлĕх пытанса тăрать çав тусра?! Украинăра хĕрсем мĕн тери хитре пулнине эсĕ хăв та пĕлетĕн вĕт-ха? Çав тус—Галинка—çинчен шутлатăп. А эсĕ, Терентий? Хăш енчисем çак эсĕ? Ят—славянни ячĕ, питкуçа пăхсан, каснă-лартнă цыган эсĕ.

— Ну-и чухлатăн та çак эсĕ. Шăпах тĕл пырса тивратрĕн. Питкуç тăрăх, чăнах та, эпĕ цыгана мар, грузина ытларах пăхнă пулас вара. А чăннипе мана чăваш çуратнă. Илтнĕ пулĕ-çке чăваша?

— Епле илтмен пуптăр-ха. Манăн взвода пĕр чăваш, Степанов текенскер пур. Хурлама çук, паттăр ача. Нумай пулмасть-ха вăл «За отвагу» медаль илнĕ. Халь анчах пулнă çапăçура, ç пăлă, ун çине икĕ фриц сиксе ӳкнĕ. Вăл ачи маттур, ун пек самантсенче çухалса каяс çук. Пĕрне патне пырсах автоматпа персе ӳкернĕ, теприне—прикладпа çапса пăрахнă.

— Ку, чăнах, тĕлĕнмелле япала. Çак сăрта илсен, эсĕ мана паллаштăран çав Степановпа.

— Вăл мана Ульяновски таврашĕнчи тесеччĕ пулас.

— Маншăн пурпĕрех мар-и? Чăвашсем пур çĕрте те пĕр чĕлхепе калаçаççĕ. Таван чĕлхепе калаçас килет вара. Ырă çул никама та курса калаçман вĕт.

... «Катюшăн» вутпĕлен ĕçĕр вăрăм снарячĕсем сывлăша вутхĕм сирпĕтсе иртрĕç.

— Пуçланчĕ, — терĕ Константинов — Эпĕ сулахай енче пулатăп. Астуман, кăшт юлнă ан пултăр.

Унăн юлашки сăмахĕсене хăвăртăн ӳсе пыракан çĕршĕр тупăсен мĕрлевĕ хупласа илчĕ.

* * *

«Катюшăн» кĕрпе арманĕ пек шатăртатакан чĕтревлĕ сасси юлашки хут янăраса илсен, Терентий Константинов, канав хĕрне сиксе тухса, пурне те ура çине çĕкленме чĕнсе кăшкăрчĕ:

— Малалла, юлташсем, ман хăçран! Таван çĕршывшăн! Сталиншăн!

Сылтăм енче выртакан Бойденко та канав хĕрне сиксе тухрĕ.

Пулеметчик асăлă сержант Кинчяхан Бастанбаев, хăйĕн «Максимне» уçă вырăна турtса тухса, нимĕçсем еннелле кăварланнă тăхлан пульăсем сирпĕтме пуçларĕ.

Лейтенант Константинов ертсе пыракан рота, автоматсенчен, винтовкăсенчен перепере, тăшман çине тинĕс хумĕ пек куçса кайрĕ.

Боецсем, сăрт айлăмне чупса çитсе, сăрт тӳпине тăрмалана-тăрмалана улăхма пуçларĕç. Вĕсенчен хăшпĕрисем, тӳпене улăхса çитсе, каялла шăва-шăва анаççĕ, унтан хăвăрт сиксе тăрса, сăрт сĕвекĕ тăрăх пĕчĕк кĕреçе çине тĕреленсе каллех сĕлелле тăрмашаççĕ. Кĕрех вĕсем, тăшман оборонин канавĕсене сике-сике кĕрсе, нимĕçсене прикладпа çапа-çапа ӳкереççĕ, автоматсенчен пере-пере вĕлереççĕ, гранатăсем ывăта-ывăта, нимĕçсен ӳт-пĕвĕсене татăкăн-татăкăн вакласçĕ.

Канава сиксе кĕрсен, Константинов шупка-снеме тимтирлĕ, петлицăсем çине еррейтор паллине çĕленĕ патмар нимĕçпе куçа-куçăн тĕл пулчĕ.

Нимĕç канавран сиксе тухса тарма пикенне хушăра, Константинов ăна хуса çитрĕ те, пистолет авринпе пуçран çапса, çĕр çине тĕшĕрсе антарчĕ.

Канавăн тепĕр сыпăкне чупса çитсен, вăл хĕлхем сирпĕтехен дзота курах кайрĕ. Нимĕç пĕрремĕш эшелон хыççăн пыракан пирĕн боецсем çинелле дзотран персе выртать имĕш. Константинов дзот алăкĕ умне граната ывăтсан, пулемет пеме чарăнчĕ, унăн кĕнçи амбразурăран тул енне тухса ӳкрĕ.

Тăшмана хăваласа пырса, рота вăрмана кĕрсе ӳкр